28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 28 ШАМАТКУН 144(689) №.

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕне Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăрăтнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

90. **Буденный ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Н. Н. Никитин** юлташ, ферма заведующийĕ **Н. К. Константинова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 120 процент, сыснасем енĕпе 170 процент, сурăхсем енĕпе 150 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 112 процент, çăмарта 104 процент панă.

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

91. **«Саяту» колхоз** (председателĕ **Прокопьев** юлташ, ферма заведующийĕ **Романов** юлташ).

92. **«Красная звезда» колхоз** (председателĕ **Демидов** юлташ, ферма заведующийĕ **Абрамова** юлташ).

93. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Евгеньев** юлташ, ферма заведующийĕ **Кольцов** юлташ).

94. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Егоров** юлташ, ферма заведующийĕ **Михайлов** юлташ).

95. **«Дружба» колхоз** (председателĕ **Матвеев** юлташ, ферма заведующийĕ **Петрова** юлташ).

96. **«Шеф Наркомзема» колхоз** (председателĕ **Емельянов** юлташ, ферма заведующийĕ **Кириллов** юлташ).

ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕ ПУР ЕНЧЕН ТЕ ХАТĔР ПУЛМАЛЛА

Республикăри колхозсенче тырпул пухса кĕртес вăхăт çывхарса çитрĕ. Тырпул пухса кĕртесси ялхуçалăхĕнчи чи кăткăс та йывăр ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире мĕнпур партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсемшĕн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшĕн тата ялхуçалăхĕнчи специалистсемшĕн тырпула пĕр тăккаламасăр, вăхăтра тата тĕплĕн пухса кĕме хатĕрленессинчен, çав ĕçсене туса ирттерессинчен тата кашни район, кашни колхозпа совхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене тултарассинчен пахарах задача урăх çуккине, тырпул пухса кĕртес ĕç хуçалăхпа политикăллă чи пысăк задача пулса тăнине асăрхаттарчĕç.

Çак ответлă та пысăк задачăна вăхăтра тата ăнăçлă пурнăçлассине тырă вырнă çĕрте пур тĕрлĕ машинăсемпе те туллин усă курни татса парать. Кăçал пирĕн колхозсен уйхирĕсенче 350 комбайна яхăн ĕçлемелле. Комбайнсене юсас ĕç чылай МТС-сенче вĕçленсе пырать. Вăрнар, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар тата ытти хăшпĕр МТС-сем комбайнсене юсаса пĕтерчĕç. Çак вăхăтрах комбайнсене юсас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыракан МТС-сем те пур-ха. Уйрăмăнах Пăрачкав, Первомайски, Етĕрне, Сурмайдан, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр МТС-сем юлса пыраççĕ. Çĕрпӳ МТС-ĕ 5 комбайн, Елчĕк МТС-ĕ 15 комбайн, Етĕрне МТС-ĕ 6 комбайн, Сурмайдан МТС-ĕ 11 комбайн юсамалла. Пĕтĕм республикипе юсамалли комбайнсем 140 ытла шутланаççĕ. Çак комбайнсем юсавсăрри тырпул пухас ĕçре пысăк чăрмав тума пултараççĕ.

Тракторпа ĕçлемелли молотилкăсене юсасси те МТС-сенче лайăх пырать теме çук. Паянхи куна Вăрнар МТС-ĕ кăна молотилкăсене юсаса пĕтернĕ. Элĕк, Первомайски, Пăрачкав, Сиява, Етĕрне МТС-ĕсем пĕр молотилка та юсаман. Çавăн пекех Калинино, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Сурмайдан, Шупашкар, Шăмăршă тата Çĕмĕрле МТС-ĕсем молотилкăсене çуррине яхăн кăна юсанă. МТС-сенчи мĕнпур комбайнерсен, юсакан рабочисен тырпул пухса кĕртмелли машинăсене юсас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Халиччен малта пынă Елчĕк, Çĕрпӳ МТС-сем те кăçал машинăсем юсас тĕлĕшпе юсса пынине нимĕнле сăлтавсемпе те ăнлантарса пама çук. Первомайски МТС-ĕ комбайнсемпе молотилкăсене юсассине чи кайра пырать. Анчах та МТС директорĕ Павлов юлташ машинăсем юсас ĕçре икĕ сменăпа ĕçлессине организацилемен, рабочисем валли столовăй уçман. Хальхи вăхăтра ĕçе кал-кал ертсе пымашни калама çук сиенлĕ. Комбайнсемпе молотилкăсене юсанипе пĕрлех вĕсен тракторĕсене те халех тĕрĕслесе юсаса хатĕрлемелле. Иртнĕ çул Комсомольски МТС-ĕн «Культура» колхоза ĕçлеме янă комбайнĕ трактор начар ĕçленине пула икĕ кун ĕçлемесĕр ларчĕ. Иртнĕ çулхи çитменлĕхсем ан пулччăр тесен, кашни машинăна вăхăтра тĕрĕслемелле, кашни кăлтăка тупса юсамалла. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах юсанă машинăсене йышăнакан государство комиссийĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Государство комиссийĕсем йышăннă комбайнсемпе молотилкăсене пĕр чарăнса тăмасăрах колхозсене ямалла.

Пирĕн республикăра мĕнпур тырпулăн 85 процентне лаша вăйĕпе ĕçлекен машинăсемпе пухмалла. Анчах та хăшпĕр районсенче лаша вăйĕпе ĕçлемелли машинăсене юсасси çав тери начар пырать. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче мĕнпур жнейкăсемпе лобогрейкăсен 20 процентне яхăн юсаса пĕтермен, кунта 50 молотилка юсавсăр ларать. Муркаш районĕнчи колхозсем 40 жнейка, 30 молотилка, 50 сортировка юсаса пĕтермен. Муркаш районĕн тырпула пĕтĕмпех жнейкăсемпе тата лобогрейкăсемпе пухмалла. Тăвай, Первомайски, Чкаловски районĕнче те жнейкăсене юсасси çителĕксĕр пырать-ха. Тăвай районĕнчи «Звезда» колхозăн 5 жнейкипе 2 молотилки те хатĕр мар. Кунта çурласемпе çавасене те шута илмен, вĕсене тырпул пухса кĕртме хатĕрлемен. Çавăн пек ответсăрлăха мĕнле ăнлантарса пама пулать-ха? Чăн малтанах кунта çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем айăплă. Вĕсем машинăсене юсас тĕлĕшпе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Советпа парти организацийĕсем кунта тăтăшах контроллесе тăмаççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре кашни кун, кашни сехет хаклă. Мĕншĕн тесен «тырпул пухса кĕртес ĕç—вăхăтра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма пултараймасть. Вăхăтра вырса пуçтартăн—тырпуллă пултăн, кая юлтăн — тырпулсăр юлтăн». Сталин юлташăн çак ытла та вырăнлă сăмахĕсене кашни колхозăн асра тытмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем тырпул пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсене государствăна тăратма мĕнле хатĕрленсе çитнине государство комиссийĕсем тĕрĕслемелле тата тĕрĕсленин итогĕсене райисполкомсемпе парти райкомĕсенче пăхса тухмалла. Райисполкомсемпе парти райкомĕсен тĕрĕсленĕ чух палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Уйрăмăнах халĕ машинăсемпе транспорт инвентарĕсене хăвăртрах юсаса пĕтерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Хăшпĕр колхозсенче тимĕрçĕсем çук пирки машинăсене юсас ĕç начар пырать. Тимĕрçĕсем çук колхозсене кӳршĕри колхозсенчен тата районри промышленность предприятийĕсенчен тимĕрçĕсем ямалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление кашни колхознике тĕплĕн ăнлантарса памалла тата ăна пĕр пăрканмасăр пурнăçласа пырас ĕçе колхозлă ялăн пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле.

Халĕ, Саратов облаçĕнчи трактористсемпе комбайнерсем колхозлă ялти ĕçсыннисем патне Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе çырнине сӳтсе-явасси пырать. Саратов облаçĕнчи трактористсемпе комбайнерсен тата Вăрнар районĕнчи колхоз председателĕсен, МТС-па хатĕрлев организацийĕсен работникĕсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен патриотизмлă паха пуçарăвне кашни колхозра, совхозра тата МТС-ра сӳтсе-явса социализмлă ăмăртăвăн аплă хумне сарса ямалла.

Тырпул пухма тухиччен вăхăт ытла та сахал юлчĕ. Çак кĕске вăхăт хушшинче кашни колхоз, кашни МТС хăйĕн мĕнпур машинисене тата тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте кирлĕ мĕнпур инвентарьсене юсаса хатĕрлемелле.

Колхозниксем, трактористсемпе комбайнерсем тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксем вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç, тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса илсе, хамăрăн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ӳстерĕç.

Вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртетпĕр

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозăн (председателĕ орденоносец Галзов юлташ) уйхирĕсенче вăйлă тырпул çитĕнет. Çак тырпула пухса кĕме тытăначчен эпир ытти ĕçсене туса пĕтерес тесе тимлĕн ĕçлерĕмĕр. Çĕртме сухине эпир июнĕн малтанхи кунĕсенчех туса пĕтертĕмĕр. Халĕ иккĕмĕш хут сухалатпăр. Пур тĕрлĕ тырă калчисемпе çĕрулми, кантăр, пахчаçимĕç акнă лаптăксене çумкурăкĕнчен тасатрăмăр. 100 тонна ытла силос хыврăмăр, вĕлтĕрен, армути тата ытти выльăх апачĕсем те нумай хатĕрлерĕмĕр. Выльăх çуртйĕрĕсене те пĕтĕмпех юсаса пĕтертĕмĕр.

Халĕ утă çулас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Утă çулнă çĕрте 2 сенокосилкăпа тата çавасемпе ĕçлетпĕр. Пирĕн колхозăн улăх утти 60 гектар, акнă курăксем 40 гектар шутланаççĕ, вĕсене çак кунсенчех çулса пĕтеретпĕр.

Вăйлă тырпула лайăх пухса кĕртес тесен, пур енчен те тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ. «Марс» колхозăн пухса кĕртмелли тырпул пурĕ 1000 гектара яхăн шутланать. Çуртырриисем кăна 728 гектар, вăл шутра тулă 360 гектар. Çуракине кĕске вăхăтра ирттернине пула, ырашпа пĕрлех тулă та пиçсе çитет. Ĕç ытла та хĕрӳ пулассн кăçал пуриншĕн те паллă. Çавăнпа та колхозниксемпе колхозницăсем тырпула пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Пирĕн колхозăн 8 жнейка пур, вĕсем пурте юсавлă. Авăн çапма 2 полусложнăй молотилка хатĕрлесе хутăмăр. Вĕсене ĕçлеттерме пирĕн колхозăн икĕ двигатель пур. Двигательсем валли 40 кубометр вутă хатĕрлерĕмĕр. Колхозра 60 ридван тата 50 урапа пур, вĕсем пурте юсавлă тата 10 урапа çак кунсенчех туса пĕтереççĕ.

Колхозăн 30 амбарне те тасатса дезинфекцилесе хунă. Çапнă тырпула виçсе илмешкĕн 4 тарасана тĕрĕслеттерсе клеймо çаптартăмăр. Икĕ итеме тасатса çине çĕнĕрен витрĕмĕр. Унсăр пуçне 1 сушилка тата 1 авăн турăмăр. Тырă вырма тухсан виççĕмĕш кунне авăн çапма тытăнатпăр. Кĕлте турттарма тата хатĕрлев пунктне тырпул леçме икĕ бригада уйăрса вĕсене 20-шер лаша çирĕплетсе патăмăр.

Тырпул пухса кĕртме ятарласа план тунă. Ыраша 6 кунта, çуртрие 12 кунта вырса пухма шутлатпăр. Колхозра тырпул пухнă çĕрте пĕтĕм вăйпа туллин усă курас тесе, тырă вырма тухнă малтанхи кунранах тырпул пухса кĕртекенсем валли столовăй ĕçлеме тытăнать, унта пĕр вăхăтрах 300 çын апатланма пултарать. Унсăр пуçне 150 ача валли ясли пулать, унта ĕçлеме 6 çын уйăрнă. Столовăйпа ясли валли кирлĕ продуктăсем, савăт-сапа, вутă тата ытти кирлĕ япаласем те çителĕклĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тата Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе каланине колхозра кашни бригадăрах сӳтсе-явнă. Çавăн хыççăн вара тырпул пухса кĕртес ĕçĕн планне турăмăр, ăна колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ.

Уйра ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн туса пырас тесе, кашни бригада çумне 4 коммунист тата 2 комсомолец çирĕплетнĕ. Вĕсем ытти колхозниксемпе пĕрлех хирте ĕçлесе кашни кунах хаçатсем вуласа памалла тата «Боевой листоксем» кăлармалла. Пирĕн колхозра 4 бригада. Вĕсенче кашнинчех пĕрмаях «Боевой листоксем» тухса тăраççĕ. Кăçал пурĕ 114 номер тухнă. Пĕтĕм колхозĕпе икĕ эрнере пĕрре тухакан стена хаçачĕ пур, вăл пурĕ 9 номер тухнă. Унсăр пуçне лаша витинче кăсал конюхсем 8 номер кăларнă тата МТФ-ра 7 номер тухнă. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хаçачĕсене юратаççĕ, ăна тухнă хыççăн пухăнса вулаççĕ тата хаçат валли статьясемпе заметкăсем те çырсах тăраççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе «Марс» колхоз лайăх хатĕрленсе кĕтсе илет. Вăйлă тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр.

З. САБИРЗЬЯНОВ.
Сăрийелĕнчи вулав çуртĕн заведующийĕ.

УТĂ ÇУЛСА ПĔТЕРНĔ

ÇĔРПӲ. «Çĕнĕ пурнăç», «Хĕрлĕ Тивĕш», «Балтиец», «Дружба» колхозсем, утă çулса пĕтерсе, государствăна утă пама тытăнчĕç. «Çĕнĕ пурнăç» колхоз государствăна районри ытти колхозсенчен малтан çĕнĕ утă парса татрĕ.

А. ИВАНОВ.

ГОСУДАРСТВĂНА УТĂ ПАРАÇÇĔ

СĔНТĔР. Районри чылай колхозсем утă çулма тухсанах государствăна утă пама тытăнчĕç. Кăпас ял Советĕнчи «КИМ» колхоз чи малтанхи паха утта 27 центнер государствăна парса, плана пĕтĕмпех тултарчĕ. Çавăн пекех «Комбайн», «Канаш» тата «Кубас» колхозсем те государствăна утă памалли плана çурри ытла тултарнă.

(Хамăр корр.).

„Броневик" колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). 1943—44 çулсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнăшăн Услапари «Броневик» колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Колхозниксем çак Хĕрлĕ Ялава хăйсен аллинче тытса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Кунта СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен йышăннă постановление тĕп программа вырăнне хурса ĕçлеççĕ.

Кăçал та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз июнĕн 1-мĕшĕ тĕлнех чылай ирттерсе тултарчĕ. Вăрçă çулĕсенче колхозран фронта тата ирĕке кăларнă районсем валли 86 лаша панă, государствăна аш-какай та çулсерен ытларах та ытларах парса пынă.

Кунта выльăх-чĕрлĕхе ĕçе пĕлекен, опытлă колхозниксем пăхаççĕ. Акă М. Федоров юлташ ăйăрсем пăхнă çĕрте, Е. Сорокина юлташ ĕне пăхнă çĕрте 13-шер çул ĕçлеççĕ, И. Алексеев юлташ 8 çул хушши фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет.

Сысна пăхакан А. Козлова кăçал 8 сысна аминчен 117 çăвăр илсе сыхласа хăварчĕ. Ф. Христофорова, хур пăхнă çĕрте ĕçлесе, 46 хур вырăнне 157 хур пăхса çитĕнтерет.

Колхозри выльăх-чĕрлĕх работникĕсем халĕ выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрлес тата выльăх апачĕ ытларах хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Пĕтĕ кĕрересем валли 40 вырăнлăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç, выльăх витисене пурне те юсаса çитернĕ, вĕсене шуратнă.

Хĕлле выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ пултăр тесе, ферма работникĕсем хăйсен вăйĕпех 20 центнер вĕлтĕрен, 15 центнер армути, 125 лав путек çаппи, 80 центнер витаминлă утă хатĕрлерĕç тата 30 тонна силос хывса хăварчĕç.

Е. ВОЛКОВ.

ПАХЧА ТЫТАКАН ХУЛА ÇЫННИСЕНЕ ПУЛĂШАССИ

Рабочисемпе служащисен уйрăм тата ушкăнлă пахча ĕçне пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен ВЦСПС çумĕнчи Комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура пахчаçимĕç лартса тăвакан хула çыннисем валли пахчаçимĕç хумалли хатĕрсем юсас тата çĕнĕрен туса сутас ыйтăва пăхса тухнă. Ларура çак ыйту пирки РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн, РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи промысла кооперапи Управленийĕн, вырăнти промышленноçра ĕçлекен рабочисен профсоюзĕсен, транспорт машинисем тăвакан заводсемпе чугун çул завочĕсенчи рабочисен союзĕн Центральнăй Комитечĕсен представителĕсем сăмахсем тухса каланă.

Комитет профсоюз организацийĕсене çĕнĕ пахчаçимĕçе упрама мĕн чухлĕ хатĕр кирлине шута илме, çав хатĕрсене юсама тата рабочи снабжени отделĕсен предприятийĕсенче, вырăнти промышленноçпа промкооперапи артелĕсенче çĕнĕрен туса кăларма хушса хăварнă.

Ларура çавăн пекех СССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ Шаров юлташ рабочисемпе служащисем хăйсен пахчисенче туса илнĕ купăстапа помидора тата хăяра тăварлас ĕçе организацилесси çинчен пĕлтернĕ. Профсоюз организацийĕсемпе пахчаçимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене ОРС-семпе магазинсем урлă тивĕçлĕ норма тăрăх тăвар сутма хушнă. (ТАСС).

ХУРА ТИНĔСЕ МИНĂСЕНЧЕН ТАСАТАÇÇĔ

Хура тинĕсĕн çурçĕр-хĕвеланăç сыранĕ çывăхĕнче катерла тральщиксен подразделенийĕ пĕр çулталăк хушши ĕçлет ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар Хура тинĕс тавраш не ирĕке кăларнă хыççăн, тральщиксем Одесса, Очаков, Херсон, Николаев порчĕсене тата ыттисене те карапсем ишме çул уçса пачĕç.

Хура тинĕсĕн çурçĕр-хĕвеланăç районĕнче тăшманăн тĕрлĕ йышши минисем пит нумай пулнă. Япăх çанталăкпа çилтăвăла пăхмасăр, катерла тральщиксен морякĕсем минăсене ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ, карапсем валли тинĕс çулĕсене уçса параççĕ. (ТАСС).

Ырă сунса кĕтетпĕр сире, Берлина çапăçса илнĕ геройсене!

Çĕрле пĕр сехетре Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан боецсен эшелонĕ килни çинчен радио пĕлтернĕ хыпара Шупашкарти мĕн пин çын хапăл туса итлемерĕ-ши!

...Поезд килмелли вăхăт тĕлне станцăна халăх нумай пухăнчĕ. Кунта — партипе совет организацийĕсен представителĕсем, уйрăм предприятисемпе учрежденисен коллективĕсен представителĕсем, таврăнакан воинсен тăванĕсемпе хурăнташĕсем.

Поезд кĕтнĕ вăхăта çитеймерĕ. Ку паллах ĕнтĕ, эшелонпа чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ-хĕрĕсем таврăнаççĕ, эшелонĕ чăваш çĕршывĕ урлă каçать. Кашни станцăрах, кашни разъездрах боецсенчен кам та пулин анса юлать, кашни станцăпа кашни разъездах герой-воинсене ĕçсыннисем кĕтсе илме тухнă. Воинсене кĕтсе илме тухнă ĕçсыннисем эшелона ытларах чарса тăрса, киле таврăнакан салтаксемпе ăшшăн калаçасшăн.

— Эпир кĕтме хăнăхнă. Тăватă çул кĕтнине темиçе сехет кĕтетпĕр-ха,—тесе йăпатаççĕ эшелона кĕтсе илме тухнă хĕрарăмсем пĕр-пĕрне.

Ирĕксĕр кĕтмелле пулнă вăхăт усăсăр иртмерĕ: хĕрарăмсем таврари вырăнсенчен уй чечекĕсем пухрĕç.

Ултă сехетре Ишлей енчен паровоз тĕтĕмĕ курăнса кайрĕ.

Акă, теплушкăсем çинчен салтаксем анаççĕ. Вĕсем патне тăванĕсем, ахаль паллакан çынсем чупса пырса пĕр-пĕрне ыталаса чăмăртаççĕ.

Çĕнтерӳçĕ-воинсем таврăннă ятпа вокзал умĕнче митинг пулса иртрĕ. Митинга ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ уçрĕ.

— Сире, Берлин çине Çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартнă воинсене,—терĕ Ислюков юлташ,—Шупашкарти ĕçсыннисен ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Эсир тăшмана çĕнтерсе пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăвартăр. Халĕ ĕнтĕ сире, мирлĕ ĕç тапхăрĕнче, хамăрăн совет çĕршывĕн хăватлăхне татах çирĕплетес тесе, ăнăçлă ĕçлеме сывлăх сунатăп.

Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан боецсене Облвоенкоматăн Политотдел начальникĕ Тютиков подполковник, Винокурова юлташ, Шупашкар станци начальникĕ Шувалов юлташ саламлă сăмахсем каларĕç.

Çартан таврăнакансен ячĕпе икĕ орденпа виçĕ медаль кавалерĕ старши сержант Толстов (Сĕнтĕр районĕнчи Шашкар çынни) кĕтсе илме пухăннă çынсене салам каларĕ.

— Юлташсем, эпир тăватă çул хушши хаяр та ирсĕр тăшмана хирĕç çапăçса çав тери пысăк ĕç турăмăр. Эпир Атăл çыранĕнчен пуçласа Эльба çыранне çити йывăр çула утса тухрăмăр, фашистла Германие çĕнтерсе халĕ киле таврăнма илтĕмĕр... Сире, хамăрăн тăван республикăри ĕçсыннисене, халĕ Берлинра, Германире юлнă чăваш салтакĕсем хĕрӳллĕ салам калама хушса ячĕç пире.

Сержант Паршиков, кĕтсе илме пухăннă çынсене саламласа, çапла каларĕ:

— Эпир нимĕç фашизмне çĕнтерсе унăн йăви çине—Берлин хулин рейхстагĕ çине Çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартрăмăр. Пирĕн çĕршыври халăхсем пĕрлĕхлĕ боевой лагерь туса хунă пирки, пире коммунистсен партийĕ, тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пынă пирки эпир вăйлă та сĕмсĕр тăшмана çĕнтерме пултартăмăр. Эпĕ хам Витебск облаçĕнчи вырăс çынни. Вăрçа пула манăн çемье кунталла куçса килсе Мари АССР-не вырнаçнă. Вĕсене унта вăрçăн чи йывăр кунĕсенче мари халăхĕ тăванла кĕтсе илнĕ, мари халăхĕ патĕнче вĕсем тăван килçуртпа тăван ял-йыша тупрĕç. Мана хама акă чăваш халăхĕ сума суса кĕтсе илет. Шăпах ĕнтĕ, юлташсем, пирĕн çĕршывăн вăй-хăвачĕ тĕрлĕ халăхсен çакăн пек пĕрлĕхĕнче, çĕршывăн пурнăçне аслă Сталин юлташ ертсе пынинче пулать. Эпир çакăн пек пĕрлĕхлĕ пулнă пирки фашизма çĕнтерсе унăн йăвине—Берлина тытса илтĕмĕр. Халĕ пирĕн воинсем Германи çĕрĕнче нимĕç империализмне ура çине тăмалла мар тăвас тесе тăрăшаççĕ. Эпир, киле таврăннă салтаксем, хамăрăн тăван халăха, хамăрăн çулпуçăмăра аслă Сталин юлташа тупа туса çапла калатпăр: эпир, вăрçăра писнĕ, Германи фашизмне аркатса тăкса Берлин çине Çĕнтерӳ ялавĕ çĕклесе лартнă воинсем, мирлĕ ĕçре те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе хамăрăн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ӳстерĕпĕр.

Çартан таврăнакан салтаксене апатлантарнă хыççăн, малалли çула пăрахутпа каякансене—пристань çине ăсатса ячĕç, Шупашкар таврăшĕнчи ялсене каякансене—колхозсенчен лавсем чĕнсе иличчен Горвоенкоматăн сборнăй пунктне вырнаçтарчĕç.

ÇĔНТЕРӲПЕ ТАВРĂНАКАН ВОИНСЕНЕ КĔТСЕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Энтри Пасар ял Советне кĕрекен колхозсенче Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан воинсене кĕтсе илме тăрăшсах хатĕрленеççĕ. Халĕ колхозсенче Хĕрлĕ Çара кайнă ватăрах çынсен килĕсене кайса паллашса, вĕсене мĕнпе пулăшмаллине палăртнă. Государство фронтовиксен çемьисене паракан çăмăллăхсемпе тĕрĕс усă курнине тĕрĕслесе тухнă.

Çак кунсенче «Ударник» колхозра Ирина Исаковăн упăшки киле таврăнмалла. Халĕ колхоз Ирина Исаковăна 3 пăт тырă тата ытти çимĕçсем те парса пулăшрĕ.

Энтри Пасарĕ Вăрмăртан калкан мăн çул çинче. Станцăран таврăнакансем ку ял витĕр çӳреççĕ. Халĕ кунта çĕнтерӳпе таврăнакан воинсене кĕтсе илме хатĕрленсе колхоз клубне илемлетсе йĕркеленĕ. Унта çĕнĕ лозунгсемпе плакатсем çырса çапнă, каннă вăхăтра вулама хаçат-журналсем çителĕклĕх пулаççĕ. Хăнасене ăшшăн кĕтсе илме дежурнăйсем уйăрнă.

Воинсем килнине пĕлтерсенех станцине кайса килме ,кашни колхозрах пĕрер лаша уйăрнă.

А. РУМЯНОВА.

ÇАРТАН ТАВРĂНАКАН ВОИНСЕНЕ ПУЛĂШМА КОЛХОЗНИКСЕМ АПАТ-ÇИМĔÇПЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ УЙĂРСА ХУРАÇÇĔ

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен йышăннă закона районри колхозсенче тулли кăмăлпа сӳтсе-яваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, çартан килекен воинсене пулăшма, апат-çимĕç уйăрса хунисĕр пуçне, вĕсене выльăх-чĕрлĕх уйăрса парса пулăшаççĕ. Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозра киле таврăнакан паттăр воинсем валли 5 пăру, 3 сурăх, 5 сысна çури уйăрса хунă. Ку ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать.

Услапари «Броневик» колхоз членĕсем воинсене пулăшма 8 сысна çури, 2 пăру уйăрнă. Туçи Мăратри «Клевер» колхоз 3 пăру, 5 сурăх пама пулнă. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, хăйсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче пурте пĕр кăмăллă пулса, çартан таврăнакансене 3 пăру тата 2 сурăх пама йышăннă. Çавăн пекех кунта ытти апат-çимĕç те çителĕклĕ таран уйăрса хунă.

В. ЗАЙЦЕВ.

Вагон çинче

—Инçерен-и эс, юлташăм?
Эп килетĕп инçерен,
Вăрçă пынă çĕрсенчен.
—Эпĕ те унта пулсаччĕ.

Вагонсем çил пек вĕçеççĕ,
Чарăнмасть-ха калаçу.
Кашниннех-çке вăрăм çул,—
Хăвăртрах киле çитесчĕ.

—Мăшăр çунатсем пулсассăн
Хăвăрт çитĕп хам киле,
Ăшă саламсем илсе.
—Эпĕ те çаплах, юлташăм!

Сар уссиллĕ пехотинец
Асилет Чăваш çĕрне—
Хире, ешĕл садсене,—
Хатĕрлес вĕсем халь çимĕç.

Старшина—тутар çыннийĕ —
Курать Шурă Атăла.
Вăрçăччен унта çулла
Ишнĕ кимĕпе хум çийĕн.

Тăван пек вĕсем пуплеççĕ
Аслă вырăс чĕлхипе.
Вĕсем пулнă улăп пек,
Вăрçнă чыслăхшăн, телейшĕн.

Курăнаççĕ авă ырăн
Капăр çĕмĕртпе пилеш.
Çĕнтерӳçĕсем килеç,
Кĕтсе ил эс, тăван вырăн.

Яков СИГАЙ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

МУРКАШ. Районри шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленеççĕ. Тойкилтĕри 7 çул вĕренмелли шкул валли виçĕ класлă çĕнĕ çурт туса лартнă. Кунта класри доскасемпе партăсене сăрланă, юсавлă маррисене юсанă. Классене лайăх çуса тасатнă. Шкул библиотекине çĕнĕ кĕнекесем илсе пуянлатнă. Пионер ĕçпе туса пыма пионерсен пӳлĕмне йĕркеленĕ. Атапайри пуçламăш шкул вĕренекенсем валли çĕнĕ мунча туса пĕтерчĕ. Пасăрпари, Мулкачкассинчи пуçламăш шкулсем те çывăх кунсенчех çĕнĕ мунчасем туса çитереççĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасене шута илсе тухнă тăрăх, кăçал 1-мĕш класа районĕпе 645 ача вĕренме пымалла. Вĕсем валли вĕренӳре кирлĕ япаласене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ. 4.700 учебник ытла илнĕ. Нумай шкулсенче вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнчех Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе Хĕрлĕ Çарта пурăнакансен ачисем валли столовăйсем организациеççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Вулакан çинчен шухăшламан хаçат

(Первомайски районри „Коммунар“ хаçата пăхса тухнă май)

Партин чи çивĕч те чи вăйлă хĕçпăшалĕ пулса тăракан хаçат-журналсем, вăл шутра районри хаçатсем те, халăха коммунистла воспитани парас ĕçре палла вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак чăнлăха ĕнтĕ «Коммунар» хаçат редакторĕ Петров юлташ та пĕлет пулмалла. Пĕлет пулĕ те, ун çинчен манса кайнă пулас çав...

«Партийное строительство» журналăн 1945 çулхи март уйăхĕнче тухнă 6-мĕш номерĕнче М. И. Калинин «Корреспондентсемпе корреспонденцисем çинчен» ятлă хайĕн статьинче çапла каланă:

«Эпĕ çапла шутлатăп: хаçатсемпе Радиокомитетăн ĕçĕнче хаçата лайăх йĕркелесси чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Хаçатра грамматика йăнăшĕсене пĕр йăнăш хăвармиччenex тасатса çитермелле. Ку енпе корреспондентсемпе редакторсен пирĕн классиксенчен вĕренсен те намăс пулас çук», тенĕ.

Çак енчен илсен, «Коммунар» хаçатăн кăçалхи çур çулхи номерĕсенче пысăк çитменлĕхсем куç умне тухса тăраççĕ.

Хăшпĕр тĕслĕхсене илсе кăтартар:

Хаçатăн 26-мĕш номерĕнче (1945 çулхи июнĕн 28-мĕшĕ) коммунистсен районри пухăвĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Долгов юлташ тунă доклада кĕскетсе пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă вырăн пур:

«...Кăçал районĕпе 450 кĕсре, 500 ĕне, 1800 сурăх чуптармалла пулсан, 342 лаша (?), 187 ĕне, 948 сурăх анчах чуптарнă». Мĕн шутланă-ши редакторĕ çапла çырса хунă чухне?.

Чăвашсем хурт-хăмăра авалтанпах вĕллепе шутлаççĕ: «Коммунар» хаçат урăхла хисеплет иккен. «Колхозăн малтанхи çул 10 пуç хурт пулнă», тесе çырнă Г. Долговăн статьинче (25-мĕш номер, 1945 çулхи июнĕн 21-мĕшĕ).

Хăшпĕр чухне хаçат тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет: тракторпа сухаланă тесе калас вырăнне вăл «трактор çинче сухаланă» (21-мĕш номер, 1945 çулхи майăн 24-мĕшĕ) тесе çырать.

Вулатăн та хаçата, тĕлĕнетĕн: вулакансем çинчен шухăшласа пăхмасть пулĕ редактор? Акă пăхăр-ха: «Халь пирĕн колхозра лашасем пурте тенĕ пеккех чăтăмлă. Вăйсăртараххисене пурне те вăйлă апат çине лартнă» тенĕ хаçатăн 13-мĕш номерĕнче. Мĕн каласшăн-ши районри колхозниксем «Коммунар» хаçат лашасене лартса (?) апатлантарни çинчен пĕлтернине вуласан?

Эпир илсе кăтартнă тĕслĕхсем пуринчен ытла ялхуçалăхĕпе çыхăнса тăракан ыйтусем пулаççĕ. Чăнах та, хаçат ялхуçалăх ыйтăвĕсене çутатса пама тăрăшать. Анчах та çулте кăтартнă пек çавăрттара-çавăрттара хуни хаçатра пичетлекен статьясемпе заметкăсен пахалăхне сухатать.

Районра сураки епле пынине çутатса тăнине илер.

Хаçата вуланипе районра массăллă сураки хăçан пуçланнине пĕлме çук. Майăн пĕррремĕшĕнче райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Яковлева районра сураки мĕнле пынине пĕтĕçтерсе çырнă статьяна пичетлесе кăларнă. Статья пуçламăшĕнче «Нумай колхозсем суракине лайăх хатĕрленсе тухрĕç, колхозниксене ĕçе тĕрĕс мобилизацилерĕç», тенĕ. Статья варринче вара «Анчах нумай колхозсенче суракине кирлĕ пек пуçлаймарĕç», тесе çырнă.

Кунта хăшне ĕненмелле-ши? Районри «нумай» колхозсем суракине лайăх хатĕрленсе тухнине-и, е «нумай» колхозсем суракине кирлĕ пек пуçлайманнине-и?

Мартăн 29-мĕшĕнче «Коммунар» хаçатра «Трудовик» колхоз «Парижская Коммуна» колхоза социализмлă ăмăртăва чĕннине пичетлесе кăларнă. Хушăран каласан, çав пысăк документа мĕн пирки «договор» тени палла мар. Договор çине икĕ енĕ те, икĕ колхоз представителĕсем алă пусмалла. Вара тин вăл документ договор шутне кĕме пултарать. Кунта апла мар, ун айне «Трудовик» колхоз членĕсем кăна алă пуснă, çавăнпа та вăл договор пулмасть, «Трудовик» колхозăн обязательстви кăна пулать.

Çав документра каланă тăрăх, ăмăрту епле пынине суракине тухас умĕн, сураки хыççăн тĕрĕслесе тухмалла пулнă. Анчах та хаçат вăл документ çинчен мансах кайнă, ăна пичетлесе кăларнă хыççăн виçĕ уйăх иртнĕ, ăмăрту епле пыни çинчен хаçатра пĕр сăмах та каламан.

Хаçатра орфографи йăнăшĕсем те, корректура йăнăшĕсем те т. ыт. те сахал мар. Акă, сăмахран: «кăçалхи» çырас вырăнне «кăçалхн» çырса кăларнă, «выляса» вырăнне—«выльяса», суракансем—«сунакансем», вĕренме—«верме», штурмлакан—«штрумлакан», Будапешт—«Бутапешт» т. ыт. те.

Хаçатăн тата çакăн пек çитменлĕх пур. вăл терминсене пĕр пек çырмасть. Акă 3-мĕш номерти умстатьяра (1945 çулхи январĕн 11-мĕшĕ), пĕр терминах икĕ тĕрлĕ çырнă: «невус», «тислĕк». Хайĕн статьине çырса хунă хыççăн редакторĕ вуласа тухнă-ши?

Хушăран çакна та асăрхаттарас пулать. Хаçат ял ячĕсене кĕскетсе çырать: А. Тармăш, П. Нурăс, П. Пашъел, Н. Шăхаль, К. Арапуç, А. Чемен, К. Эйпеç т. ыт. те. Ял ячĕсене пĕтĕмĕшпех кĕскетмесĕр çырас пулать.

«Коммунар» пăтраштарса çырнисене пурне те каласа пĕтерме çук. Пĕр сăмахпа каласан, хаçат редакцийĕ тирпейсĕр ĕçлет. Çав тирпейсĕрлĕх чăвашла янăх çырнинче кăна мар, нит пысăк ыйтусене çутатса парас ĕçре те палăрать.

1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар гитлерла Германие аркатса тăкнă май, аслă Сталин юлташ Совет халăхне чĕнсе историллĕ сăмах каларĕ. Çулпуçăн сăмахне пĕтĕм халăх пĕтĕм чун-чĕрепе хапăл туса кĕтсе илчĕ. Майăн 10-мĕшĕнче «Коммунар» хаçатăн черетлĕ номерĕ пичетленсе тухнă, анчах вулакан унта аслă Сталин чĕнсе каланине тупаймасть.

Майăн 17-мĕшĕнче хаçат тухман, тепĕр номерĕ майăн 24-мĕшĕнче тин тухнă, анчах унта та Сталин юлташ чĕнсе каланине пичетлесе кăларман. Мĕншĕн? Мĕнле ăнлантарса парĕ хаçат редакторĕ çак киревсĕр ĕçе, хăй политика тĕлĕшĕпе тимсĕр пулнине?

Чăнах та ĕнтĕ, «Коммунар» хаçат вулакан çинчен шухăшламасть.

Латви ССР-ĕн государство гимнĕ

РИГА, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Латви ССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕ Латви ССР-ĕн государство гимнĕн тексчĕпе музыкине çирĕплетнĕ. Гимн сăмахĕсене Рокпелнис тата Ванагс поэтсем çырса хатĕрленĕ, музыка авторĕ — Лепин композитор.

Çĕнĕ гимна 1945 çулхи августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕм республикăра юрлама тытăнаççĕ.

Государствăна выльăхсем самăртса парасси—паха ĕç

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановленире советпа парти тата çĕрĕç органĕсем выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес енĕпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Партипе правительство çав постановленире государствăна аш-какай пама 1945 çулта колхозсенче выльăх-чĕрлĕх самăртмалли плана облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх паларса çирĕплетрĕç. Государствăна обязательство шучĕпе паракан выльăхсене пĕтĕмпех уйрăмăн çитерсе самăртмалла. Сыснасене уйрăмăн тăрантармалла, ĕне-выльăхсемпе сурăхсене лайăх курăклă ана-çаран çинче кĕтмелле.

Чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕхе самăртасси çине кирлĕ пек пăхманнине пула, пысăк сиен кураççĕ. Аш-какай обязательстви тăрăх государствăна вăтам ÿт-пÿллĕ е ырхан выльăхсем панă пирки колхозри выльăхсен шучĕ нумай чакать тата аш-какайĕ те пахалăхсăр пулать. Пирĕн республикăри колхозсем государствăна иртнĕ çулхи иккĕмĕш кварталта аш-какай панă выльăхсен шутĕнче мăнтăр ĕне-выльăхсем 4,8 процент, мăнтăр сурăхсем 4 процент, мăнтăр сыснасем 30 процент кăна пулнă. Ишлей, Канаш, Йĕпреç, Советски, Элĕк тата Шăхасан районĕсенчи колхозсем уйрăмах ырхан выльăхсем панă.

Кашни колхозăннах государствăна пама палăртнă сыснасене уйрăмăн пăхса, ĕне-выльăхсемпе сурăхсене лайăх курăклă вырăнсенче кĕтсе самăртмалли план пулмалла.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ малалла та ан чактăр, унăн тухăçлăхĕ ÿссех пытăр тесен, партипе совет тата çĕрĕç органĕсен выльăхсене самăртас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Чылай колхозсем партипе правительствăн постановленине тĕрĕс ăнланса илнĕ, вĕсем государствăна обязательство тăрăх аш-какай тăратнă чухне выльăхсене самăртса параççĕ. Çĕрпÿ, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне тата Вăрмар районĕсенчи колхозсем государство обязательствине пĕтĕмпех самăртнă выльăхсемпе тултараççĕ. Çапла вара вĕсем, государствăна вăхăтра тата лайăх аш-какай панипе пĕрлех, выльăхсен шутне те сыхласа хăвараççĕ.

Выльăхсене тĕштырăпа кăна мар самăртмалла. Чылай колхозсем питĕ тĕрĕс тăваççĕ, вĕсем выльăхсене тăрантарнă çĕре тĕштырă е çăнăх сахал расходлаççĕ, выльăх-чĕрлĕхе çĕрулмипе, кăшманпа, утă çăнăхĕпе тата ытти япаласемпе самăртаççĕ. Сăмахран, Вăрмар районĕнчи «Большевик» колхозра самăртма тăратнă кашни сыснана 35 кун хушши куллен 4-шар килограмм çĕрулми, 1,5-шер килограмм утă çăнăхĕ, 1,5-шер килограмм посыпка çитерсе пынă. Çак апатсем çине куллен 20-шер грамм тăвар яра-яра панă. Ку нормăн сурринче çăкăр пĕçерсе çитерни. Выльăхсене кашни кун 4 хутчен апатлантарнă. Çапла çитернине пула, самăртма тăратнă кашни сысна йывăрăшĕ кунне вăтам шутпа 700-шер грамм хушăнса пынă. Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра та самăртма тăратнă сыснасене çĕрулмипе утă çăнăхне çăкăр пек пĕçерсе параççĕ. Кунти сыснасем кунне вăтамран 500-шер грамм ытла хушăнса пыраççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Поженар», «Новая жизнь», «Богатырь» колхозсем те сыснасене лайăх самăртса государствăна параççĕ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозра государствăна памалли ĕне-выльăхсемпе сурăхсене лайăх курăклă уйрăм вырăнта кĕтеççĕ. Выльăхсене çĕрле 3—4 сехетлĕхе кăна яла илсе килеççĕ. Выльăхсем кунта лайăх самăрлаççĕ. Çапла вара колхоз государствăна паха аш-какай парать.

Анчах выльăхсене самăртасси, пĕтĕм республикипе илсен, пачах та çителĕксĕр пынине палăртмалла. Уйрăм çĕрĕç пайĕсемпе колхозсен руководителĕсем çак ĕç çине çиелтен пăхнине пула, нумай çĕрте выльăхсене самăртмалли плана пурнăçласа пыраймаççĕ.

Çĕрĕç пайĕсенче ĕçлекенсемпе колхоз руководителĕсем государствăна аш-какай парса татма кирлĕ выльăхсене суйласа илсе уйрăмăн пăхас ĕçе организацилеме тивĕçлĕ. Самăртма палăртнă выльăхсене актсем çырсах уйăрмалла, тĕрлĕ чирсенчен сыхланас шутпа уколсем тумалла, вĕсене яланах çуса, тасатса тăмалла. Уйхирте кĕтсе самăртма палăртнă выльăхсем валли кĕтÿ кĕтмелли чи лайăх вырăнсем уйăрса парас пулать. Çав выльăхсене сыхласа çÿреме шанчăклă колхозниксене уйăрмалла, выльăхсем уйхирте мĕн чухлĕ вăхăт пулмаллине çирĕплетсе памалла. Кĕтÿ кĕтекен ана-çаран çывăхĕнчех таса шыв пулмалла. Выльăхсене уйхирте, вăрманта е улăх-çаранта усрама картасем тумалла. Выльăхсем уйхирте талăкне 16—18 сехетрен кая пулмалла мар. Самăртма уйăрнă выльăхсене ура айĕнчи апатсăр пусне, акнă курăка та çулса çитермелле.

Зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем выльăхсем самăртассине тĕрĕс организацилес ĕçре колхозсене яланах пулăшса тăма тивĕçлĕ. Выльăхсем мĕнле самăрлса пынине тĕрĕслесе тăма вĕсене кашни уйăхрах виçсе пăхмалла. Выльăхсем самăртмалли плана колхозсем мĕнле пурнăçласа пынине яланах контроллесе тăмалла.

Аш-какай парса татман колхозсен фермăсенчен сысна çурисем сутма чарăнмалла. Пуринчен ытларах хĕлле е çуркунне çуралнă сысна çурисене самăртма тăрăшмалла. Çĕрĕç пайĕсемпе райисполкомсен сысна фермисем çук колхозсене, вĕсем аш-какай парса татман пулсан, аш-какай парса татнă сысна фермиллĕ колхозсенчен самăртма сыснасем парассине организацилемелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, малашне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă чухне, выльăхсене самăртмалли плана мĕнле тултарнине те шута илеççĕ. Выльăхсене самăртмалли плана тултараймасан колхозсем ăмăртура мала тухнисен шутне кĕме пултараймаççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем выльăхсене самăртмалли плана ытлашшипех тултарма, çапла вара государствăна паха аш-какай пама пултараççĕ.

Вырăнти совет тата çĕрĕç органĕсенчи работниксен фермăсенче ĕçлекенсене выльăхсем самăртмалли плана пурнăçлама куллен пулăшса пымалла, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинче государствăна ытларах та пахарах аш-какай парассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса пымалла.

В. ИГНАТЬЕВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Англипе Америка тата Китай японецсене асăрхаттарни

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Потсдамран пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче каçхине Черчилль, Трумэн тата Чан Кай-ши чĕнсе калани пичетлесе кăларнă. Унта японецсене пĕр сăмахсăр парăнма кирли çинчен е хăйсен çĕршывне пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнине курасси çинчен асăрхаттарнă.

Германие «çав тери усçăн» кăтартса панă хăрушла тĕслĕх пирки аса илтерсе, чĕнсе каланинче çапла асăрхаттарнă: «США-па Британи империйĕн тата Китайăн пехотăпа тинĕс-çар тата сывлăшçар флочĕн çав тери пысăк вăйĕсем, хĕвеланăçĕнчен илсе пынă çарсемпе, авиацие тата флотсемпе темиçе хут ытларах хăватланнăскерсем, пĕтĕм вăйпа пырса çапма хатĕр тăраççĕ. Пирĕн пĕтĕм çар хăвачĕпе усă курни японецсен хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнине, Япони территорине пĕтĕмĕшпех аркатса тухнине пĕлтернĕ пулĕччĕ».

Японие парăнма хушса, союзниксем çакăн пек условисем кăларса тăратни çинчен пĕлтернĕ: вăрçă пуçласа яракансене пĕтермелле тата çĕнĕ, мирлĕ йĕрке туса хумалла; çакна туса çитериччен, Японин никама пăхăнманлăхне японецсен виçĕ пысăк утравĕ çинче кăна хăварса, Япони территорине оккупацилемелле.

Японие тĕппипех хĕçпăшалсăрлантармалла тата сăмах, совесть, шухăш ирĕклĕхне туса хумалла.

ПРОФСОЮЗСЕН ПАРИЖ ХУЛИНЧЕ ПУЛСА ИРТМЕЛЛИ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМĔН

ПАРИЖ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Профсоюзсен кăçалхи сентябрь уйăхĕнче Парижра пухăнакан пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн секретариачĕ профсоюзсен Лондонра пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференцине хутшăннă çĕршывсем пурте пекех çак конференцие хутшăнма килĕннине регистрациленĕ. Латинла Америка çĕршывĕсен представителĕсем конференцие епле пырасси халлĕхе палла мар-ха. Латинла Америкăри ĕççыннисен конференцийĕн председателĕ Ломбардо Толедано секретариата çапла пĕлтернĕ: Латинла Америкăри профсоюзсем Парижри конференцие пулаççĕ, анчах та çав çĕршывсем пĕр делегаци яраççĕ-и е кашни çĕршыври профсоюзсем хăйсен делегачĕсене уйрăм яраççĕ-и, халлĕхе палла мар-ха, тенĕ. Ку ыйтăва татса парасси кашни участник мĕн чухлĕ взнос тÿленинчен килет. Çак ыйту Эйре профсоюзĕсене те çавăн пекех пырса тивет, вĕсен те çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ çук. Секретариат хăшпĕр чухне тÿлемелли взноса пĕчĕклетме май пуррипе çуккине пăхса тухать.

Конференцие хутшăнасси пирки секретариата çĕнĕ ыйтусем пыраççĕ. Парижри конференцие çаксем хутшăнма ыйтса янă: «Çурçĕр Китайри ирĕклĕ территорисенчи ĕççыннисен союзĕ», «Австрири профсоюзсен ассоциацийĕ». Бельги аллинче тăракан Конго профсоюзĕсем хăйсене конференцие уйрăм организаци шучĕпе чĕнме ыйтаççĕ.

РУМЫНИРЕ ÇАР ПРЕСТУПНИКĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

БУХАРЕСТ, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче çар преступникĕсен 5-мĕш ушкăнĕн ĕçĕсем пирки йышăннă приговора пичетлесе кăларнă. Айăпланакан 15 çынтан 14-шне тĕрлĕ вăхăтлăха тĕрмене хупмалла тунă. К. Теодорескуна 25 çуллăха, А. Петронинуна—15 çуллăха, А. Владескуна — 10 çуллăха, Станкпа Мапена—9-шар çуллăха тĕрмере çирĕп йĕркепе хупса усрама йышăннă. Ыттисене пĕр çултан пуçласа 5 çула çити тĕрмене хупмалла тунă. Айăпланакансенчен пĕрне ирĕке кăларнă.

БРАЗИЛИ ЭСМИНЕЦĔ НИМĔÇСЕН ИКĔ ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИНЕ ТЫТСА ЧАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бразили эсминецĕ нимĕçсен икĕ подводнăй лодкине тытса чарнă. Эсминец çав лодкăсене хуралласа Рио-Гранде-До-Сул еннелле илсе пырать.

ГРЕЦИ КАРАПĔСЕМ АЛБАНИ ÇЫРАННЕ ПЕНĔ

РИМ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири телеграф агентстви июлĕн 25-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, грексен виçĕ карапĕ, Саранде çывăхĕнчи Албани çыранĕ патне çывхарнă та, çыран çинелле пулеметпа пенĕ, çавăнтах каялла кайнă. Çырана хÿтĕлекен гарнизон çавăн пек провокацилле пенине хирĕç ответлемен.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре американецсен 300 самолечĕ ытла Шанхай районне тапăнни çинчен каланă.

Америка авиацийĕн ытти самолечĕсем Фузанри (Корея) аэродром çине, японецсен Амойри (Китай) вăрçă объекчĕсем çине, Хонсю утравĕ çинчи Михо аэродромĕсем çине тата Танегасима утравĕпе Амамиосима утравĕ çинчи вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Австрали самолечĕсем японецсен Целебес утравĕпе Ява утравĕ çинчи объекчĕсене тапăннă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флот командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка самолечĕсем японецсен Кюсю утравĕ районĕнчи вăрçă объекчĕсене, çар тата суту-илÿ суднисене тапăннă.

Америкăн 3-мĕш флотĕнче тăракан крейсерсемпе эсминецсем Япони гидросамолечĕсен Кусимотори базине персе тăнă.

Америкăн 3-мĕш флотĕнчи авианосецсем çинче вырнаçса тăракан самолетсем июлĕн 25-мĕшĕнче каллех Кобери тата Курери вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Америка самолечĕсем çавăн пекех тата Нагойăри аэродромпа ытти сооруженисем çине те бомбăсем пăрахнă.

Англи парламентне кама суйлани çинчен пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян радио Англи парламентне 625 суйлав округĕ тăрăх кама суйлани çинчен пĕлтернĕ. Университет суйлав округĕсем тăрăх кама суйлани çинчен çитес эрнере çеç пĕлтереççĕ. Пĕр суйлав округĕнче лейбористсен кандидачĕ вилнĕ, çавăнпа çав округра кама суйлани çинчен те пĕлтерме май çук.

625 суйлав округĕ тăрăх кама суйланине пăхсан, ку суйлавра лейбористсен партийĕ вăйлăн çĕнтерсе çиеле тухни курăнса тăрать.

Лейбористсен партийĕнчен парламента 389 депутат суйланă (1935 çулхи суйлавра ку партирен 154 депутат суйланă пулнă);

Консерваторсен партийĕнчен 197 депутат суйланă (1935 çулхи суйлавра 387 депутат суйланă пулнă);

Национал-либералсен партийĕнчен — 14 депутат суйланă (1935 çулхи суйлавра—33 депутат пулнă);

Либералсен партийĕнчен — 10 депутат суйланă (1935 çулхи суйлавра—17 депутат пулнă);

Рабочисен никама пăхăнман партийĕнчен—3 депутат (1935 çулхи суйлавра—4 депутат суйланă пулнă);

Коммунистсен партийĕнчен—2 депутат (1935 çулхи суйлавра — 1 депутат пулнă);

Коммонуэлс партийĕнчен — 1 депутат суйланă;

Никама пăхăнманнисен партийĕнчен — 9 депутат суйланă (унччен 4 депутат пулнă).

Британири радио саракан корпораци хăйĕн радиопередăчинче çакна палăртнă: ку таринччен яланах консерваторсен партийĕ çиеле тухса пынă округсенче чылайĕшĕнче ку суйлавра лейбористсен кандидачĕсем çĕнтерсе çиеле тухнă, сăмахран, вĕсем Бирмингамра, Ливерпульре, Манчестерте çĕнтернĕ. Коалициллĕ правительствăра министрсем пулса ĕçленĕ лейбористсене пурне те суйланă, çав вăхăтрах Черчиллĕн консерваторсенчен тăракан хальхи правительствин министрĕсемпе министрсен заместителĕсене 26 çынна суйламан.

Рейтер агентстви уйрăмах çакна палăртать: тинĕс министрне Брендан Бракэна суйламан, вăл «Черчиллĕн çывăх тусĕ. Информаци министрĕ пуличчен вăл Черчиллĕн парламентри секретарĕ пулса ĕçленĕ. Брендан Бракэна Лондонри Паддингтон суйлав округĕнче суйламалла пулнă, анчах ку округра лейбористсен кандидачĕ Макфарлан генерал-лейтенант çĕнтерсе çиеле тухнă. Макфарлан генерал-лейтенант 1941 çулта Англин Мускаври çар миссийĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ, унччен вăл Гибралтар губернаторĕ пулнă». Рейтер агентстви шухăшĕпе, консерваторсен партийĕн тепĕр пысăк çухатăвĕ—«Лесли Хор-Белиш суйланмасăр юлни пулать. Лесли Хор-Белиш вăрçă пуçламĕшĕнче çар министрĕ пулнă, Черчиллĕн консерваторсенчен тăракан хальхи правительствинче вăл национальнăй обеспечени министрĕ пулса ĕçленĕ. Лесли Хор-Белиша Девенпорт суйлав округĕнче суйламалла пулнă, анчах та унта лейборист Майкл Фут çиеле тухнă, Майкл Фут Англири пĕр чаплă çемье çынни, вăл çемьерен паллă либералсем чылай тухнă. Майкл Футшăн 2.000 сасă ытларах пуханнă».

Рейтер агентстви çавăн пекех тата Индипе Бирма ĕçĕсен министрĕ Леопольд Эмери аяла пулнине те палăртать, ăна лейборист Шурмер çĕнтернĕ, уншăн 5.634 сасă ытларах пухăннă.

Плимутри Саут Саттон суйлав округĕнче иртнĕ суйлава консерваторсен партийĕн кандидатне леди Астора (хĕрарăм) суйланă пулнă, халĕ вăл округра лейбористсен кандидачĕ Люси Миддлтон (хĕрарăм) çиеле тухнă.

Уинстон Черчилле суйланă. Уншăн 27.688 суйлавçă сасăланă, ăна хирĕç тăнă кандидатшăн 10.488 сасă пухăннă. Варшвикширти Лемингтон суйлав округĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Антони Идена суйланă. Уншăн 37.110 сасă панă, ăна хирĕç тăнă лейбористшăн 19.476 сасă пухăннă.

Консерваторсен партийĕн председательне Ральф Эштона суйламан. Ноттингемширти Рашклифф суйлав округĕнче ăна хирĕç тăнă лейбористкăна Патона суйланă.

Либералсемпе национал-либералсем питĕ аяла пулса юлнă.

ЭТТЛИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, лейбористсен партийĕн лидерĕ Клемент Эттли июлĕн 26-мĕшĕнче, парламента кама суйлани паллă пулнă хыççăн, çапла каланă: лейбористсен партийĕ тĕпллĕн хатĕрлесе тунă программăпа тухрĕ. Тулашри политика тĕлĕшпе,—тенĕ Эттли,—пирĕн тахçанхи традицисемех пур, эпир хамăр политикăна лейбористсен юлашки правительствинче Артур Гендерсон ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă чухне пурнăçа кĕртме тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Эпир нихăçан та хамăрăн пĕр тĕп шухăшран пăрăнман. Çав шухăш вăл—тĕнчере çĕнĕ йĕрке туса хурасси, çав йĕрке вăрçăсем тухассине чарса пымалла. Эпир çавăн пекех тата тĕнчери экономика тĕлĕшпе çакăн пек политикăна тытса пырассишĕн тăрăшса ĕçленĕ: çав политика вăл—пур çĕршывсенчи çынсен пурнăçне те лайăхлатма пулăшмалла. Пирĕн шалти политика тулашри политикăпа килĕшÿллĕ. Эпир вăл политикăна халăха суйлав умĕн усçăн кăтартса патăмăр. Парламента кама суйлани çакна кăтартса пачĕ: суйлавçăсем пирĕн программăна ăнланса илнĕ, вĕсем пире çав программăна пурнăçа кĕртме пултараççĕ тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен эпир ăна пурнăçа кĕртессишĕн тăратпăр, ăна пурнăçа кĕртме пултаракан çынсем те пур пирĕн.

ЧЕРЧИЛЛЬ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче каçхине Черчилль çапла тухса каланă:

Англи халăхĕ суйлавра сасăласа йышăннă шухăшĕ паян паллă пулчĕ. Çавăнпа эпĕ чи йывăр кунсенче илнĕ полномочие хам çинчен сиретĕп. Японие хирĕç пыракан вăрçа пĕтермешкĕн хама май паманшăн шеллетĕп. Анчах та вăл вăрçа пĕтермешкĕн кирлĕ ĕççене пурне те лайăх хатĕрлесе çитернĕ, результатсем эпир кĕтме пултарнинчен чылай хăвăртрах пулса тухĕç. Çĕнĕ правительство шалти ĕçсем тĕлĕшпе те, тулашри ĕçсем енчен те питĕ пысăк ответлăх илет. Эпир пурте çĕнĕ правительство ăнăçлă ĕçлессе шанатпăр. Халĕ манăн Англи халăхне вăл мана пĕр иккĕленмесĕр пулăшса тăнăшăн чунтан тав тăвасси кăна юлать.

ЧЕРЧИЛЛЬ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: июлĕн 26-мĕшĕнче Лондонри вăхăтпа 19 сехетре Черчилль, Букингем дворецне пырса, Англи корольне правительство вырăнтан тухма ыйтни çинчен пĕлтернĕ.

ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА ЭТТЛИЕ ХУШНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче каçхине Англи королĕ çĕнĕ правительство тума Эттлие сĕннĕ. Эттли Букингем дворецне Черчилль хăйĕн правительстви вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ хыççăн темиçе минутранах пынă.

5 ПИН ПРОТЕСТАНТ СВЯЩЕННИКĔ ФРАНКО РЕЖИМНЕ ПĔТЕРМЕ ЫЙТАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Протестант» журналăн редакторĕ Лесли пичет представителĕсене каласа панă тăрăх, виçĕ правительство —СССР, США тата Англи пуçлăхĕсен Берлинри конференцийĕн участникĕсем патне 5 пин протестант священникĕ ячĕпе телеграмма янă. Çав телеграммăра Испанири фашистла режиме пĕтерсе тăкма ыйтнă. Апла тумасан, çав фашистла режим Берлинри конференцин çитĕнĕвĕсене пăсма пултарать, тенĕ телеграммăра. Телеграммăра каланă тăрăх, Франко е унăн монархиллĕ преемникĕ Испанире власть тытса тăма пултармалла мар. «Европа халăхĕсене çапла туни кирлĕ тесе, текех ултала-а е конституциллĕ монархи законлă пулать тесе ăнлантарса пама çук. Истори çав намăс япалана яланлăхах пĕтерсе хума хушать».

Ответлă редактор
заместителĕ **Н. С. СТЕПАНОВ.**

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ ИСКУССТВО ĔÇĔСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ

Саратоври государство консерваторийĕ çумĕнчи Чăвашсен опера студийĕне вĕренме илет

Студие 18 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ чăваш чĕлхине лайăх пĕлекен арçынсене те, хĕрарăмсене те, 7 çултан сахал мар вĕреннĕскерсене, вĕсен сасă мĕнлине пăхса илеççĕ.

Студие вĕренме кĕрес текеннисене, вĕсен сасă мĕнлине, çавăн пекех тата танлав, ритмика мĕнлине, музыкăна асра тытма пултарулăх мĕнлине пĕлес тесе, тĕрĕслесе пăхаççĕ. Тĕрĕслевре вĕренме кĕрес текенсен 2—3 халăх юррине е совет композиторĕсен юррине юрласа памалла.

Студи театрсем, оперăпа музыка комедийĕ валли юрăçсем, артистсем, музыкантсем вĕрентсе кăларать. Вĕренме илнисене стипенди параççĕ тата общежитие вырнаçтараççĕ.

Заявленисене 1945 çулхи августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, ăçта мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельство, врачран илнĕ справка, виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка.

Студие кĕрес текенсене 1945 çулхи августăн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче тĕрĕслесе пăхаççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Дом Советов, Управление по делам Искусства при Совнаркоме Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

Типография ..., Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000

НТ 00181